26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
2
ЭРНЕКУН
135 (6372) №.

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Халăха çар ĕçне вĕрентессине куллен туса пымалла

Пирĕн аслă полководец Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар валли резервсем хатĕрлес ĕçе куллен туса пыма хушать. Тăшмана çĕнтерес тесен, Хĕрлĕ Çар пĕрмаях тата çĕнĕрен те çĕнĕ дивизисемпе хутшăнса пымалла. Çавăнпа та пирĕн пĕтĕм халăхăн çар ĕçне куллен вĕренмелле, пăшал тытма пултаракан кашни çыннăн хамăрăн Тăван çĕршыва сыхлама яланах хатĕр тăмалла.

Çакна шута илсе, СССР Союзĕн Совнаркомĕ пĕтĕм халăха çар ĕçне вĕрентесси çинчен постановлени йышăнчĕ. Кунсăр пуçне, совет Правительстви халăха сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентесси çинчен постановлени йышăннăранпа паян шăпах ĕнтĕ икĕ çул çитрĕ. Çак постановленисем гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Совет Союзĕн правительстви йышăннă постановленисене пурнăçа кĕртсе пырса, пирĕн ĕççыннисем çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйран тăрăшрĕç. Çак иртнĕ икĕ çул хушшинче всевобуч пункчĕсем пиншер ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентсе кăларчĕç. Осоавиахим организацийĕсем сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма ĕççыннисене вĕрентес ĕçе ăнăçлăн туса ирттерчĕç. Çавăнпа пĕрлех харпăрхăй ирĕкĕпе çарти тĕрлĕ специальноçсене вĕренекенсен йышĕ те пĕчĕк мар. Тăван çĕршыв патриочĕсем минометчик, пулеметчик, связист, радист, бронебойщик тата ытти те пулма вĕренеççĕ. Вĕсен хушшинче пирĕн хĕрарăм-патриоткăсем те сахал мар.

Çапах та пирĕн халиччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларма юрамасть. Тăшман вăйлă-ха. Ăна татăклăнах çĕнтерес тесен, пирĕн нумай вăй хурса ĕçлемелле пулать.

Всевобуч пункчĕсенче ĕççыннисем тăваттăмĕш черетпе çар ĕçне вĕренсе тухрĕç. Кĕçех пиллĕкмĕш черетпе пухнă юлташсем вăрçă ĕçне вĕренме тытăнаççĕ. Тăваттăмĕш черетпе вĕрентсе кăларнин итогĕсем кăтартса панă тăрăх, всевобучăн чылай пункчĕсенче ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентесси лайăх пулса пыни курăнать. Дисциплинăна çирĕп тытса пыракан, вĕрентӳ ĕçне лайăх йĕркеленĕ пунктсенче вĕренӳ результачĕсем те лайăх. Сăмахран, Шăхасан районĕнчи Атнашри всевобуч пунктĕнчи боецсенчен 30 проценчĕ «отлично», 30 проценчĕ «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пынă. Вĕренӳ пунктĕнче дисциплина çирĕп пекех çирĕп пулнă.

Анчах çителĕксĕр ĕçлекен всевобуч пункчĕсем те пур-ха. Хăшпĕр пунктсенче уйрăмах дисциплина сӳрĕкленни палăрать, çав вăхăтрах дисциплинăна çирĕплетессишĕн кĕрешӳ вăйлатса пыни çук. Уйрăм пунктсенче вуншар занятисем сиктерсе хăварнă боецсене те тĕл пулма пулать, апла пулин те вĕсем тĕлĕшпе закона палăртнă мерăсене йышăнмаççĕ. Начар çанталăкран тата тĕрлĕ йывăрлăхсенчен хăраса, вĕренӳ [illegible]

те тĕл пулаççĕ. Всевобучăн чылай пункчĕсенче политикăллă ĕçе вăйсăрлатни палăрать.

Çак çитменлĕхсем вĕренӳ нахалăхне чакараççĕ. Çавăнпа та всевобуч пункчĕсенче пиллĕкмĕш черетпе пухнă юлташсене вĕрентнĕ чухне çав çитменлĕхсене пачах пĕтерес пулать. Инструкторсемпе политработниксен кадрĕсене малтанах пухса çитермелле, всевобуч боецĕсене вĕрентме кирлĕ макетсене тата ытти наглядный пособисене çителĕклĕх пулса хатĕрлемелле. Çак ĕçсем мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине районсенчи çар комиссарĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен çарĕç отделĕсен тӳрремĕнех хăйсен сăнаса тăмалла.

Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи хăйĕн приказĕнче çапла асăрхаттарчĕ: «Чи кирли халĕ çакă пулса тăрать: пирĕн пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн хăйĕн çапăçури ăсталăхне кунран-кун лайăхлатса пымалла, Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур командирĕсемпе боецĕсен вăрçă опытне вĕренмелле, çĕнтерӳ ĕçĕ мĕнле ытать, çавăн пек çапăçма вĕренмелле». Çулпуçăн çак кăтартăвĕсене всевобуч командирĕсемпе боецĕсен яланах асра тытса пĕтĕм вăйпа пурнăçа кĕртсе пымалла.

Кунпа пĕрлех халăха сывлăшран тапăннинчен, химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентес ĕçе те вăйсăрлатмалла мар, Осоавиахим организацийĕсен хальхи вăхăтри тĕп задачи—халăха сывлăшран тата химиллĕ тапăнуран сыхланма вĕрентесси пулса тăрать. Çак задачăна вара хăшпĕр çĕрте тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Сăмахран, Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнче ĕçлекенсем сывлăшран тапăннă чухне тата химиллĕ тапăну вăхăтĕнче мĕнле сигналсем пулассине пĕлмен. Çакă ĕнтĕ унти осоавиахим организацийĕ хăйĕн ĕçне çителĕксĕр туса пынине кăтартса парать.

Ирсĕр тăшман нимĕнле тискер ĕçсем умĕнче те чарăнса тăмасть. Вăл пирĕн хуласемпе ялсем çине тапăнса сиен кӳме тăрăшать. Тăшман тапăннисен сиенне пĕчĕклетес тесен, пирĕн вăл тапăннисенчен сыхланма лайăх пĕлсе тăрас пулать. Çакна ăнланнă çĕрте сывлăшран тапăннинчен сыхланма халăха вĕрентес ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Ишлей районĕнчи «МОПР» колхозри осоавиахим организацийĕ хăйĕн ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек туса пырать. Вăл колхозниксене сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешме, ворошиловла тĕл пеме вĕрентет. Кунти колхозниксем пулемета, винтовкăна, гранатăсене вĕренеççĕ.

Юлашки вăхăтра партипе комсомолăн тата профсоюзăн хăшпĕр организацийĕсем халăха çар ĕçне вĕрентесси мĕнле пулса пынипе интересленме пăрахрĕç. Ку ĕнтĕ пачах та тĕрĕс мар. Партипе комсомол райкомĕсен, пуçламĕш организацисен ĕççыннисене çар ĕçне вĕрентессине куллен ертсе пымалла. Хĕçпăшал тытма пултаракан кашни патриотах кирлĕ вăхăтра хамăрăн Тăван çĕршыва сыхлама пултартăр тесе, çар ĕçне вĕрентессине тĕплĕн те пĕр [illegible] туса пымалла.

Тырпулсене пухса кĕме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес ĕçе организованно тытăнар

Енер колхозсем уйри тырпулсене пухтарса кĕме мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслес ĕçе тухас ĕç пуçланчĕ. Малтанхи кунах чылай районсенче тĕрĕслӳ комиссийĕсем ĕçе тытăнчĕç. ВКП(б) Ишлей райкомĕн секретарĕ Андреев юлташ пĕлтернĕ тăрăх, унта партипе совет активĕ колхозсене пухса кайнă. Ку район пур колхозсене те тĕплĕн тĕрĕслесе [illegible] тытăннă.

Анчах та хăшпĕр районсенче тĕрĕслес ĕçе малтанах пуçарма майсем пулман-ха. Тĕрĕслӳ çинчен Сĕнтĕрвăрри районĕнче колхозсен руководителĕсем чылайĕшĕ пĕлмеççĕ. ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Моряков юлташ калани тăрăх, районри партипе совет активĕ паян та колхозсене тухса каять. Тĕрĕслӳ ĕçне Шупашкар районĕнче те тытăнман-ха.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕнче

Чăваш АССР Верховный Советне суйлассине тепĕр срока хăварасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

Вăрçă вăхăтне пула, Чăваш АССР Верховный Советне суйлассине тата тепĕр çул хăварас.

Чăваш АССР-ĕн пĕрремĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсене çав срока тăсас.

Пирĕн авиаци Орел чугунçул узелне, Карачев станцине тата Тамань портне тапăнни

Июнĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ çĕр çĕрле пирĕн инçете вĕçекен авиаци Орел чугунçул узелне тапăннă. Чугунçул эшелонĕсене станци сооруженийĕсене хушшинче бомбăсем нумай çурăлнине асăрхана. Бомбăсем пăрахнине пула 15 пушар тухнă, 3 вăйлă взрыв пулнă. Çавăн пекех тата Карачев станцине [illegible] эшелонсене çав [illegible] бомбăсем [illegible] вăйлă взрывсем [illegible] боеприпассен складне çине [illegible] территорийĕнче пушарсем [illegible] Ытти [illegible] пирĕн самолечĕсем Тамань портне [illegible] бомбăсем [illegible].

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине таврăннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 29-мĕшĕнче фронтра нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче хутран-ситрен перкелесе тăнă. Пирĕн чаçсем нимĕçсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă тата артиллерипе минометсен темиçе батарейине пусарса лартнă. Пĕр участокра гитлеровецсен отрячĕ пирĕн оборонăн малти хĕррине разведка туса пĕлме хăтланнă. Пĕр подразделенири боецсем тăшмана хăйсен çывăхне пыма панă та пулеметсемпе тата пăшалсемпе харăс пеме пуçланă. Нимĕçсен нимĕн йĕрки-палли сĕр каялла чакса каймалла пулнă, пирĕн пралук карса тунă чăрмав умĕнче вĕсен темиçе вунă салтакĕ вилсе е аманса выртса юлнă.

* * *

Севск районĕнче пирĕн артиллеристсем тăшман войскисене турттарса пыракан чугунçул эшелонне пенĕ. Снарядсем тӳрремĕнех пырса тивнипе темиçе вагон çĕмĕрĕлсе кайнă. Пирĕн разведчиксен ушкăнĕ, кĕçĕн лейтенант Король ертсе пынипе, тăшманăн çĕр алтса тунă çулĕсем çине кĕрсе кайнă. 20 гитлеровеца çити пĕтерсе тăксан вĕсем хăйсен чаçне тĕрĕс-тĕкĕлех таврăннă.

* * *

Белгород районĕнче снайпер Конкин юлташ 3 кун хушшинче 8 гитлеровеца вĕлернĕ, снайпер Фатулаев юлташ 4 фашиста вĕлернĕ, гварди красноармеецĕ Александр Горячев темиçе кун хушшинче 13 нимĕçе вĕлернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем разведка тунă тата тăшман çине персе тăнă. Пĕр участокра Уалсов лейтенант нимĕçсен миномет батарейи ăçта вырнаçса тăнине пĕлнĕ. Вара вăл орудисене малтанах хатĕрлесе хунă позицисем çине тĕксе кăларнă та тӳрремĕн персе тăшманăн миномет батарейине унăн çыннисемпе пĕрлех пĕтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтĕнче пĕр-пĕрин çине перкелесе тăнă. Пирĕн артиллеристсемпе минометсем нимĕçсен 3 дзотне ишсе антарнă, 2 пулеметне тата грув турттарса пыракан 6 автомашинине пĕтерсе тăкнă, унсăр пуçне тата пирĕн оборонăн малти линийĕ патне çывăхарма хăтланнă нимĕçсен темиçе ушкăнне сапаласа янă. Пĕр чаçăн разведка тăвакан отрячĕ тăшман траншейисене вăркăнса кĕрсе кайнă. Тытăçура пирĕн боецсем нимĕçсен унтер-офицерне тата темиçе салтакне вĕлернĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен ушкăнĕ шоссе çулĕ çинчи виçĕ кĕпере сыхласа тăракан нимĕç салтакĕсене тапăннă. Партизансем гитлеровецсене вĕлернĕ те кĕперсене çунтарса янă. Пĕр пулемет, 30 винтовка, 60 граната тата 2.000 патрон тытса илнĕ. Икĕ кунтан çав отрядри партизансемех, минăсем лартса, нимĕçсен автомашинине сирпĕнтерсе янă. СС-сен карательнăй отрядĕнчи 3 офицер пĕтнĕ.

* * *

Нимĕçсен 1-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне куçнă салтак Генрих Р. çапла каласа панă: «Эпĕ служит тунă рота мана боевой подразделени пек мар, инвалидсен команди пек туйăнатчĕ. Унта кашни икĕ салтакран пĕри аманнăччĕ. Хăшĕ-пĕрисем сурансенчен сывалса та çитменччĕ. Май уйăхĕнче ротăна çынсем хушса парĕç. Çав çынсенчен 10-шĕ çарта служит тума пачах юрăхсăр çынсем. Çав çынсене вăрçă ĕçне сахал вĕрентнĕ. Нумайĕшĕ пулемета тыткалама та пĕлмеççĕ. 2 эрне хушшинче совет артиллерийĕ тата снайперсем пенипе ротăра 40 салтак пĕтрĕ».

* * *

Норвегирен тарнă патриотсем нимĕçсен аллине тыткăна лекнĕ красноармеецсем çав тери йывăр условисенче пурăнни çинчен каласа кăтартнă. Нимĕçсем тыткăна лекнĕ вырăс салтакĕсене Çурçĕр Норвегири Киркенес хули çывăхĕнче укрепленисем тунă çĕрте ĕçлеттернĕ. Ĕлĕкхи тумтиртен тăрса юлнă татăк-кĕсĕксене тăхăнса, красноармеецсен хĕллехи чи хаяр сивĕсенче ĕçлеме тивнĕ. Гитлеровецсем тыткăнри çынсене выçăпа асаплантараççĕ. Темĕн пек йывăр ĕçе ĕçлеттерсе, вĕсене кун каçа мĕн пурĕ те 150 грамм çĕç çăкăр параççĕ. Выçăпа, сивĕпе, чир-чĕрпе тата нимĕçсем тискеррĕн тыткаланине пула тыткăнри çынсем çăлласах вилсе пĕтеççĕ. Вырăссене чи пĕчĕк сăлтавсемпех персе пăрахаççĕ. Вилнисен тата персе пăрахнисен ӳчĕсене тыткăнра пурăнакансен баракĕсемпе юнашарах кăларса пăрахаççĕ.

* * *

Геллебекра (Дани) Дани патриочĕсен хĕçпăшалланнă ушкăнĕ пир тĕртекен фабрикăна, нимĕçсем валли ĕçлекенскере, кĕрсе кайнă. Патриотсем фабрика корпусĕсене, чĕртавар запасĕсен склачĕсене вут тĕртнĕ. Ку пушар оккупантсене пысăк сиен тунă.

Июнĕн 30-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 30-мĕшĕнче фронтра паллă улшăнусемех пулман.

Финн залившĕнче пирĕн авиаци тăшманăн хуралта çӳрекен катерне путарнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи пĕр участокра пирĕн пĕр чаçăн артиллерисчĕсем тăшман позицийĕсем çине персе тăнă, боеприпассен пысăк складне сирпĕнтерсе янă. Тепĕр участокра нимĕçсен разведка тăвакан отрячĕ, артиллерипе минометсенчен персе тăнипе хӳтĕленсе, пирĕн подразделени позицийĕсене атакăлама хăтланнă. Совет боецĕсем пулеметсемпе тата пăшалсемпе харăссăн персе нимĕç разведчикĕсене çĕр çумне хĕссе хунă. Унтан пирĕн миномет батарейисем пеме тытăннă. Гитлеровецсем вара, пысăк çухатусем тӳссе, каялла чакнă.

* * *

Белгород районĕнче нимĕçсем совет позицийĕсене разведка туса пĕлме хăтланнă. Пирĕн малти подразделенисем вĕсен атакине сирсе янă. Карса хунă пралуксем умĕнче тăшманăн 60 вилли выртса юлнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Кĕçĕн лейтенант Поцелуйко командир пулса тăракан подразделенири артиллеристсем тăшман позицийĕсем çине вăйлăн пенĕ. Миномет батарейине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн темиçе блиндажне ишсе антарнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре старши лейтенант Бенгальский командир пулса тăракан батарейăн артиллерисчĕсем хăйсен орудийĕсене тăшман оборонинчен инçех мар вырăнта вырнаçтарса лартнă та, вĕсенчен персе, тăшманăн 3 пулеметне, миномет батарейине тата нимĕçсен 70 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне, тăшманăн 2 бомбардировщикне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи пĕр участокра тăшман пехотин темиçе групп пĕр чаçăн позицийĕсене атакăлама хăтланнă. Нимĕçсем пирĕн малти лини патне пынă чухнех вĕсене пирĕн артиллеристсемпе минометчиксем вăйлăн пенĕ. Çав вăхăтрах вĕсем тăшман 1 оборонин малти хĕррипе тата шалта вырнаçнă огневой точкисене те хаярран пенĕ. Çав çапăçура гитлеровецсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтернĕ, минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă, 7 дзота çĕмĕрнĕ, боеприпассемпе горючин 2 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Пинск облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен Чапаев ячĕпе тăракан отрячĕ июнĕн 16-мĕшĕнче нимĕçсен чугунçул эшелонне сирпĕнтерсе янă. Крушение пула пĕр паровоз тата автомашинăсем тиенĕ 16 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Партизансен ушкăнĕ чугунçула 200 метр тăршшĕ пăснă. Чугунçулăн çав участокĕнче вара поездсем темиçе талăк хушши çӳреймен. Пинск облаçĕнчи партизансен тепĕр отрячĕ тăшман поездне ӳпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, салтаксемпе офицерсем ларса пыракан 6 класнăй вагон тата боеприпассем тиенĕ темиçе вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Илнĕ хыпарсем тăрăх, пирĕн авиаци июнĕн 23-мĕшĕнче Псков чугунçул узелне тапăннă чухне тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Бомбăсем тӳрĕ лекнипе станци сооруженисем ишĕлнĕ, 2 çар эшелонĕ тата штабри офицерсен вагонĕ çĕмĕрĕлнĕ. Нимĕç чаçĕсем вырнаçнă темиçе казарма ишĕлнĕ. Боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, горючин 2 складне çунтарса янă. зенитнăй орудисен темиçе батарейине аркатса тăкнă. Хуларан 5 километрти аэродромра нимĕçсен 12 самолетне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Туллимар даннăйсем тăрăх, Псков чугунçул узелĕнчи казармăсенче нимĕçсен 1000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Нимĕçсен вăйлă хуралĕ çынсене çав вокзал районне халĕ те ямасть-ха.

* * *

Югославири партизансем халăх пурăнакан Жумберак пункчĕ патĕнче нимĕçсен темиçе атакине сирсе янă, 100 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен пĕр бомбардировщикне пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе ӳкернĕ. Халăх пурăнакан Сент—Юре тата Мулава пункчĕсем патĕнче патриотсем итальянецсен пехотин 2 батальонне аркатса тăкнă. Словенире партизансем Бессинец чугунçул станцине çĕмĕрсе тăкнă. Тепĕр районра нимĕçсен çар грузĕ турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă.

ВКП(б) Обкомĕнче

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çак кунсенче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн ЧАССР-ти колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление Октябрьски районри колхозсенче мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине сӳтсе-явса, тивĕçлĕ решени йышăнса хăварчĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакна палăртрĕ: малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлени тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерессишĕн пыракан кĕрешӳре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине ВКП(б) Октябрьски райкомĕ ăнланса илмен тата çав питех те кирлĕ постановление пурнăçа кĕртессине ертсе пыман. Çавăн пирки ĕнтĕ Октябрьски районри колхозсенче партипе правительствăн постановленине пăсса пынă, ăна пурнăçа кĕртнĕ çĕрте пысăк йăнăшсем тунă.

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе района панă задание хăшпĕр колхозсене нумай пысăклатса панă, колхоз правленийĕсем вара хăйсем енчен бригадăсемпе звеносене, выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен уйрăм работниксене çав задание татах та ытларах ӳстерсе панă. Çапла, сăмахран, Маяковский ячĕпе тăракан колхоза гектартан 115 центнер çĕрулми туса илме план çирĕплетсе панă, колхоз правленийĕ вара бригадăсене çĕрулми гектартан 300-шер центнер туса илме задани панă. Çав колхозрах хăмла туса илес тĕлĕшпе задание икĕ хут пысăклатса панă. «Путь коммунизма» колхозра сĕт суса илмелли задание 100 литр чухлĕ пысăклатса панă. Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе государство панă заданисене çавăн пек пысăклатса яни тĕрĕс мар пулса тăрать, мĕншĕн тесен уйхир бригадисемпе ферма работникĕсем çавăн пек ытлашши пысăклатса панă заданисене пурнăçа кĕртме пултараймаççĕ. çавăнпа та вара ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх илме тивĕçлине илеймеççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ ĕçшĕн хушса тӳлемелли законăн такĕ чакать, колхозниксен тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес ĕçри материальнăй интересĕ пĕтет.

Сталин, Калинин ячĕсемпе тăракан тата «Социализм» колхозсенче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстермелли планлă заданисене уйхир бригадисемпе ферма работникĕсем патне паянхи кунччен те çитермен, «Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕнче вара 1943 çул валли производство планне халĕ те туман. Районри нумай колхозсенче уйхир бригадисенче яланлăх звеносем организацилемен, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсем пĕрмаях улшăнса тăраççĕ, фермăсенче выльăхсене уйрăм работниксем çумне çирĕплетмен. Колхозниксен ĕçне шута илсе пырассине начар йĕркеленĕ, планлă заданисене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине шута илмелли кĕнекене çырса пымаççĕ, çамрăк выльăхсем мĕнле ӳссе пынине виçсе тĕрĕслемеççĕ, çавăн пекех ялхуçалăх культурисене мĕн чухлĕ туса илнине те бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмăн шута илсе пымаççĕ.

Районри ялхуçалăх специалисчĕсем нумайĕшĕсем çак питех те кирлĕ ĕçрен аякра тăраççĕ, ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен Совнаркомпа Центральный Комитет йышăннă постановление пурнăçа кĕртнĕ çĕрте колхозсене кирлĕ пек пулăшмаççĕ, колхозсенче плансем тăвас, ĕçе организацилес, ăна бригадăсемпе звеносем тата выльăх-чĕрлĕх фермисем тăрăх шута илсе пырас тĕлĕшпе питех те начар ĕçлеççĕ.

Партипе правительство ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени мĕнле выран йышăнса тăнине ВКП(б) райкомĕ колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса парассипĕн тăрăшмасть, çав постановление пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем, ялсовечĕсемпе колхоз правленийĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăмасть.

ВКП(б) Октябрьски райкомĕ, çав ыйтăва 1942 çулта сӳтсе-явса, хăйĕн решенийĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине пĕрре те тĕрĕслемен. Районри «Хĕрлĕ Октябрь» хаçат ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх тупăш илнĕ колхозниксен опытне сутатса пыман, çав закона пурнăçа кĕртес ĕçри çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларман, çак тĕлĕшпе тӳсме çук сӳрĕк ĕçлекĕ пуçламĕш парторганизацийĕсене комсомол организацийĕсен, ялсовечĕсемпе çĕрĕç органĕсен тата колхозсен руководителĕсене критикăламан. 1942 çулта тата кăçалхи пиллĕк уйăх хушшинче колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлес ыйту пирки хаçатра пĕр заметка та пичетлесе кăларман.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин Октябрьски райкомне çапла тума хушрĕ: колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление колхозсенче мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине июлĕн 15-мĕшĕччен тĕрĕслесе тухмалла, тĕрĕсленĕ чухне ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстермелли планлă заданисене колхозсем патне, колхозсенче вара — бригадăсем звеносем тата ферма работникĕсем патне мĕнле тĕрĕс çитерни çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, çак постановленире кăтартнă çитменлĕхсене пĕтермелле. Çав вăхăт хушшинчех кашни колхозра колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвне ирттермелле, çав пухусенче колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен колхоз председателĕн отчетне сӳтсе-явмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин Октябрьски райкомĕн секретарьне, райисполком председательне тата райçĕрĕç пайĕн заведующине колхозсенче ĕçе организацилессине тата ăна шута илсе пырассине куллен ертсе пыма, тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе панă планлă заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн колхозниксене мĕнле хушса тӳленине тăтăшах контрольлесе пыма, звеносемпе фермăсенче çынсем улшăнса тăнине пĕтерме тата звеносемпе фермăсенчи работниксен составĕ çулталăкĕпех улшăнмалла мар тума хушрĕ. Колхозсенче тырпула бригадăсемпе звеносем тăрăх çирĕп шута илсе пымалла, çавăн пекех тата мĕн чухлĕ сĕт суса илнине, çамрăк выльăхсем мĕн чухлĕ илсе çитĕнтернине, вĕсен виçи мĕнле ӳссе пынине, мĕн чухлĕ çăм касса илнине тата ыттисене те фермăсенчи пĕр-пĕр работник çумне çирĕплетнĕ кашни выльăх-чĕрлĕх ушкăнĕ тăрăх мĕнле шута илсе пынине çирĕп контрольлесе тăмалла.

Райçĕрĕç пайĕпе МТС работникĕсен колхозсенче ĕçе мĕн чухлĕ тĕрĕс шута илсе пынине тата ĕçкунĕсене колхозниксене мĕнле шутласа панине кашни уйăхрах тĕрĕслесе тухмалла. Райçĕрĕç пайĕнчи инструктор-бухгалтерсен штатне пуçса йĕркелемелле, ĕçе шута илес, тырпулсене бригадăсемпе звеносем тăрăх тата выльăх-чĕрлĕх продукцине шута илес ыйтусемпе колхоз счетоводĕсене пухса, инструкциллĕ семинарсем ирттермелле. Планлă заданисене туса йĕркелесси çине тата вĕсене пурнăçа кĕртсе пынине шута илесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ парти райкомне ĕçшĕн хушса тӳлемелли закона тăтăшах ăнлантарса парассине организацилеме, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстерес тĕлĕшпе панă планлă заданисене ирттерсе пултарнă колхозниксен ĕç опытне мĕнпур колхозниксем хушшинче сарма, çак ĕçе коммунистсемпе комсомолецсене, ялхуçалăх специалисчĕсене, учительсене, çавăн пекех тата районри хаçатпа стена хаçачĕсене явăçтарма хушса хăварчĕ.

Малта пыракан колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление пурнăçа кĕртес ĕçри çулте кăтартнă çитменлĕхсем республикăри ытти хăшпĕр районсенче те пуррине палăртса, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин мĕнпур райкомĕсене çак решение сӳтсе-явма тата палăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнма, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен партипе правительство йышăннă постановлени мĕнле пурнăçа кĕрсе пыни çинчен парти райкомĕсен бюровĕсенче партипе комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсен отчечĕсене тăтăшах илтмелле хушса хăварчĕ.

ВКП(б Обкомĕн бюровĕ Чăвашгиза «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн Чăваш республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановление чăвашла тата вырăсла уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларма хушрĕ.

Республика уйхирĕсенче

Пысăк тухăçлă махоркăшăн

КАЛИНИНО. Уйкасри «Комсомолец» колхозри махорка енĕпе ĕçлекен бригада (бригадирĕ М. Осипова) кăçал пысăк тухăçлă махорка илессишĕн кĕрешет. Махорка калчисене минеральнăй удобренисемпе апат панă. Çумкурăксене çумласах тăраççĕ, кашни кунах шăвараççĕ.

К. ДИМИТРИЕВ.

Выльăх апачĕ хатĕрлеççĕ

Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕхсем валли тĕрсех апат-çимĕç хатĕрлет. Пумаях пулмасть çак колхоз 140 тонна силос хывнă. Кунсăр пуçне 25 лав çăка çулçи касса хатĕрлерĕ.

— Пирĕн колхозниксем выльăх-чĕрлĕх продукцине ÿстерме силос лайăх апат, теççĕ, çавăнпа та ăна нумайрах хатĕрлеме тăрăшаççĕ,—тет колхоз председателĕ коммунист И. Кузьмин юлташ.

М. И.

1943 çулшăн тырă параççĕ

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Анат Шĕвĕрти Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Варланов юлташ) государство умĕнчи обязательствăсене çулсеренех вăхăтра пурнăçласа пырать. Кăçалхи çулшăн вăл пур обязательствăсене те пурнăçланă. Аш-какай памалли кăçалхи плана вăл ытлашшипех тултарнă хыççăн, 1944 çулшăн пама шутларĕ.

Колхоз членĕсем утă çулса пĕтерчĕç. Паян-ыранах государствăна утă парса татаççĕ. Кунсăр пуçне тата çак колхоз çĕнĕ тырă шучĕпе государствăна 24 центнер ыраш пачĕ.

1.512 тонна силос хывнă

ЭЛЕК. (Хамăр корр.). Юлашки вăхăтра чылай колхозсем силос хывас ĕçе тимлĕн туса пыма тытăнчĕç. Хирлепуçĕнчи «Красный Октябрь» колхоз 42 тонна, Мăн Тунташри Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз 40 тонна, Енĕ Маякри «Ударник» колхоз 34 тонна хыврĕç.

Районĕпе ку тарăнчен 1.512 тонна силос хывнă.

Х. ЛИСИН.

Шкул ачисен паха ĕçĕ

Халь уйхирте хĕрÿ ĕç пырать. Колхозниксем хирте çум çумлаççĕ. Унта ватă колхозниксемпе пĕрле ялан шкул ачисемпе пионерсем ĕçленине те курма пулать. Вĕсем те вăйлă тырпулшăн тăрăшаççĕ.

Кушарти (Красноармейски р.) Буденный ячĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ патне ирех 24 пионер пычĕç. Пурте вĕсем çум çумлама кайма хатĕрленнĕ.

— Паян çĕрулми йăранĕсен хушшисене çумлатпăр, — терĕ бригадир. Шкул ачисем пурте çĕрулми çинчи çумкурăксене çумлама кайрĕç. Питĕ тăрăшса, ĕçлерĕç. Кăç пулнă кĕле çумласа пĕтерчĕç.

Кушарти шкул ачисем ку тарана çитсе 70 гектар çумланă. Ĕçре уйрăмах виççĕмĕш класра вĕренекен Г. Николаев, пиллĕкмĕш класра вĕренекенсем И. Родионова, С. Львова тата ыттисем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем çум çумланă çĕрте икшер норма тултараççĕ.

Çулсене юсамалли уйăхлăх

Задание тултаратпăр

ВАРМАР. Районри колхозсем çулйĕр ĕçĕнче хĕрсех ĕçлеççĕ. «15 съезд ВКП(б)», «Смычка», «Атнаш» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕн графикне ытлашшипех пурнăçларĕç. Молотов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ефремов) июнĕн 27-мĕшĕ тĕлне уйăхлăх планне 105 процент тултарчĕ. Атнаш колхозĕ те (председателĕ Матвеев юлташ) 200 кубометр çĕр чавас вырăнне 210 кубометр чаврĕ.

Анчах районра çулйĕр ĕçне халĕ те лайăххăн тытăнман колхозсем те пурха. «Свет», «Путь Ленина» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕн планне 43 процента яхăн кăна пурнăçланă.

Районĕпе çулйĕр уйăхлăхĕн заданине 72 процент пурнăçланă. Июлĕн 3-мĕшĕ тĕлне уйăхлăх планне пĕтĕмĕшпех пурнăçлама шутлатпăр.

А. СМИРНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Çулйĕр ĕçне вăраха яраççĕ

КУСЛАВККА. Июлĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри «Динамо», «Правда», «Красный Волгарь» колхозсем çулйĕр уйăхлăхĕн графикне срокчен пурнăçларĕç. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне «Динамо» колхоз плана 102 процент, «Правда» колхоз 106 процент тултарчĕç. «Правда» колхозра çулйĕр бригадине П. Романов юлташ ертсе пычĕ. Унăн бригадинчи кашни колхозникпе колхозница куллĕнхи задание тултарса ĕçлерĕç. Колхозница Кореньковка юлташ хăйĕн заданине яланах 106—110 процент тултарса пычĕ.

Район уйăхлăхра çĕр ĕçĕсен планне 80 процента яхăн пурнăçланă. Чул кăларассипе йывăç хатĕрлессине çак кунсенче пурнăçлать. Анчах çулсене тикĕслесе якатас ĕç ытти ĕçсенчен юлса пырать. «Ударник», «Кзыл Куч», Л. Каганович тата Карл Маркс ячĕсемпе тăракан колхозсем çулйĕр ĕçне ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулнине пула задание пурнăçлаймаççĕ. Л. Каганович ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Ф. Захаров юлташ ку ĕçпе пĕрре те интересленмест. «Уборкăна тухиччен плана тултарăпăр-ха, ку яхăнта колхозниксем ытти ĕçсенче пулчĕç», — тет вăл. Анчах кунта ытти ĕçсем те юлса пыраççĕ.

Çак ответлă ĕç çине Захаров пек чунсăррăн пăхнине тÿсме çук. Çулйĕр ĕçĕнче кашни колхоз председателĕн ответлă пулса, ку ĕçе большевикла ертсе пымалла.

И. ПОДКЛЕТНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли фронтовой вунăкунлăх

Сăмахпа кăна ĕçлеççĕ

Çĕрпÿ районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлеççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче ĕçе аван организациленĕ, дисциплинăна çирĕплетнĕ. Иккĕмĕш Вăрманкас ялсоветĕнчи колхозсем уйрăмах тухăçлăн ĕçленине палăртмалла. Ку ялсоветĕнчи колхозниксем чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли вунăкунлăх хушшинче хăйсен заданине ирттерсе тултарчĕç. Пĕтĕм районĕпе илсен, колхозсем июнĕн 22-мĕшĕ тĕлне вутă хатĕрлес тата турттарас плансене ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ.

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлени мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăни ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕсемшĕн, çавăн пекех колхоз председателĕсемшĕн те паллă. Анчах Красноармейски районри партипе совет организацисем, колхоз тата ялсовет исполкомĕсен тимсĕр руководителĕсем çак пысăк ĕçе пурнăçлама колхозниксемпе колхозницăсене кирлĕ пек явăçтарман. Ку тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ (секретарĕ Григорьев юлташ), райсовет исполкомĕ (председателĕ Александров юлташ) колхозсемпе ялсовет исполкомĕсен председателĕсене çирĕп кăтартусем парса, вăл кăтартусене пурнăçа кĕртнине сăнăнчех тĕрĕслесе тăмаççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕç çук. Çавăн пирки ĕç тухăçлăхĕ питех те начар.

Норма тăрăх кашни çыннăн кунне 2,5 кубометр вăрман касса хатĕрлемелле. Ку яхăнта çак нормăна тултарса ĕçлекенсем питех те сахал пулчĕç. Кăшпĕр колхозниксем куллен 1,6 кубометр çеç вăрман хатĕрлеççĕ.

Вунăкунлăхра районăн план тăрăх 5 пин кубометр ытларах вăрман хатĕрлесе турттармаллаччĕ. Анчах та халь пурĕ те 1.853 кубометр кăна хатĕрленĕ, 2.016 кубометр турттарнă. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах Карай, Тусай, Уби ялсоветĕсенчи колхозсем начар ĕçлеççĕ. Карай ялсоветĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхозран вăрман ĕçлеме çынсем сахал кайнă. Вĕсем те пулин кирлĕ пек ĕçлемеççĕ, хăйсен нормисене тултараймаççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ колхоз хăйĕн планне 20—30 процент анчах тултарнă.

С. ШАДИН,
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Чугунçул валли—вутă

ÇĔМЕРЛЕ, июлĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Район паянхи куна чугунçул валли вутă хатĕрлемелли плана 82,1 процент, турттармалли плана 92,2 процент пурнăçларĕ. Ленин ячĕпе тăракан колхозăн фронтовой вунăкунлăхра график тăрăх, 320 кубометр вутă турттармалла пулнă пулсан, вăл 368 кубометр турттарчĕ, «Молодая сила» колхоз 160 кубометр вырăнне 170 кубометр, «Новая жизнь» колхоз планран ирттерсе 16 кубометр турттарчĕç. Çав вăхăтрах «Комбинат» (председателĕ Кузьмин), «Красная звезда» колхозсем вутă турттармалли плана 28 процента яхăн çеç пурнăçланă. «Красная звезда» колхозăн 80 кубометр вутă турттармалла, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне вăл 22 кубометр çеç турттарнă. «1-ое Мая» колхозăн 80 кубометр турттармалла, анчах вăл халĕ те турттарма тытăнман-ха.

Чугунçул валли вутă хатĕрлесе турттарас ĕçе хăвăртлатмалла, панă задание июлĕн 10-мĕшĕччен пурнăçлама тăрăшмалла.

Н. ДМИТРИЕВ.

Çур çулхи плана ăнăçлăн пурнăçларĕ

Шупашкарти горпромкомбинат (управляющийĕ С. Григорьев юлташ) кăçалхи çур çулхи плана 117 процент, июнь уйăхĕнчи задание 150 процент пурнăçларĕ. Ку ĕçре ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яни нумай пулăшрĕ. Стахановецсемпе ударниксен йышĕ те чылай ÿсрĕ. Çĕнĕрен хутшăннă стахановецсенчен Смелой юлташ куллĕнхи задание 238 процент, Сергеева, Николаева, Алексеев, Агеев юлташсем ĕç нормине кашни кунах 150 процентран кая мар тултараççĕ. Çамрăк рабочисенчен Жолубев, Гуляева, Метенкина юлташсем те ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартрĕç. Гуляева юлташ ку уйăхри задание 176 процент пурнăçларĕ.

Горпромкомбинат коллективĕ иккĕмĕш çурçулта тата лайăхрах ĕçлессишĕн ăмăртăва тухрĕ.

Ф. М.

Плана ирттерсе тултарчĕ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Райпромкомбинатăн урапа-çунасем тăвакан мастерскойĕн (директорĕ Трифонов) коллективĕ хăйĕн ĕç планне уйăхран уйăха ирттерсе тултарать. Мастерской июнь уйăхĕнчи плана июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне 142 процент пурнăçларĕ. Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса янă. Кунта рабочисем пурте ăмăртса ĕçлеççĕ, фронт валли ытларах продукци туса кăларма тăрăшаççĕ. Мастерскойри тимĕрçĕ С. Гаврилов юлташ иртнĕ уйăхсенче хăйĕн нормине 110—130-шар процент тултарса пынă. Халĕ вăл нормăна куллен 180—200 процент тултарса ĕçлет. Урапа-çунасем тăвакан цехри Никифоров, Захаров тата ытти юлташсем те нормăсене ирттерсе тултараççĕ.

Мастерской директорĕ Трифонов юлташ производствăра малта пыракансен опычĕсемпе ытти рабочисене паллаштарать, кашни рабочие вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеме кирли çинчен каласа ăнлантарать.

Райпромкомбинат (управляющийĕ Платонов) стахановецсен ĕçне тивĕçлипе хаклать. Май уйăхĕнче кăна 8 рабочие премисем панă. Малта пыракансен ĕçĕсене палăртма кăтарту хăми тунă.

Мастерскойри рабочисем июнь уйăхĕнчи ĕç планне 150 процентран кая мар пурнăçлама обязательство илнĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Вĕренекенсем вутă хатĕрлеççĕ, шкул участокĕнче ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО. Ассакассинчи тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем хăйсен шкулĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлерĕç. Г. Мальцев, Т. Волков, В. Иванов, А. Михайлова, Т. Безрукова вĕренекенсем куллен 3-шер кубометр вутă касса хатĕрлерĕç.

Кунсăр пуçне, вĕренекенсем кăçал çуркунне шкул участокĕнче 80 тĕп улмуççи, 76 тĕп хурлăхан, 100 ытла хăмла çырли йывăççи лартса хăварнăччĕ. Лайăх пăхнине пула вĕсем пурте тĕрĕс-тĕкĕл чĕрĕлчĕç. Çав садран çулса илнĕ утта Хĕрлĕ Çар фондне хываççĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Совет Союзĕпе Абиссиния пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçланă

ССР Союзĕн Великобританири посолĕ И. М. Майский тата Абиссини император правительствин Великобританири посланникĕ Белата Айела Габрэ хăйсен правительствисен ячĕпе пĕр-пĕрне нотăсем панă. Нотăсенче çав икĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçласси çинчен каланă. Çав нотăсенчех пĕр-пĕрин çĕршывĕсене посланниксем ярасси çинчен каланă.

Çак акт Германипе унăн пĕр хаварлисене хирĕç кĕрешекен пĕрлешÿллĕ нацисен фронтне çирĕплетес тĕлĕшпе тата тепĕр паллă ĕç пулса тăрать.

Ют çĕршывсенче

Джозеф Дэвис Торонтăра тухса калани

ОТТАВА, июнĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 22-мĕшĕнче Торонто хулинче (Канада) массăллă митинг пулса иртнĕ. Вăл митинга, Совет Союзне хисеплесе, Канадăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăхăн нациллĕ совечĕ организациленĕ. Митинга 17.000 çын пулнă. Вĕсем хушшинче Канадăн премьер-министрĕ Маккензи Кинг, США-н Мускаври посолĕ пулнă Джозеф Дэвис, совет посланникĕ Гусев юлташ, Канадăн тĕрлĕ провинцийĕсен руководителĕсем т. ыт. те.

Премьер-министр Кинг митинга пухăннă халăха Джозеф Дэвиспа паллаштарнă. Кинг хăйĕн сăмахĕнче вырăссем захватчиксемпе геройла çапăçни çинчен пысăк хаваслăхпа каласа пĕлтернĕ.

Джозеф Дэвис хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: «Эсир мана çак праздникре чĕнни мана кăмăл тулчĕ. Çак савăнăçлă праздник Совет Союзĕпе Канада хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕрне лайăх ăнланса тăрас ĕçе çирĕплентерсе пыма пулăшмалла». Нумай пулмасть хăй Мускавра пулни çинчен Джозеф Дэвис çапла каланă: «Çав ман миссие икĕ тĕп хулара та питех те ăнăçуллă пулса иртрĕ тесе йышăнчĕç. Эпĕ, пĕр енчен, унта почтальон пулса кайнă, анчах, унсăр пуçне, эпĕ ырă ĕреклĕхĕн посолĕ пулнă. Тата çул çÿресси те хăй енчен питĕ тĕлĕнмелле пулчĕ. Эпир 4 кун хушшинче кайнă çула ахаль чухне 4 эрнере каятчĕç».

Дэвис ăна хăйне шуринчен ытла çак виçĕ япала питех те кăмăла кайни çинчен пĕлтернĕ. Вăл çапла каланă: пĕрремĕшĕ «пĕрлешÿллĕ нацисен питех те лайăх кĕрешекен боецĕсем. Эпир, — тенĕ Дэвис, — çĕнтерÿ çулĕ çине тухрăмăр». Иккĕмĕшĕ — «тĕнче питех те хĕсĕнленсе çитрĕ, килĕшÿллĕ пурнăç пĕр-пĕр пунктра пĕсăлса кайсан, пирĕн пÿрт умĕ те кисренме тытăнать». Виççĕмĕшĕ — «Канадăна США географи, политика, экономика тата вăрçă тĕлĕшпе те çав хĕсĕнсе çитнĕ çĕнĕ тĕнчен чи вăррине тăраççĕ».

Совет Союзĕ Канадăпа США халăхĕсенчен нумай йывăртарах условисенче вăрçнине паллă туса панă хыççăн Дэвис çапла каланă: совет халăхĕн паттăр «çирĕншĕн те, пирĕншĕн те питĕ пысăк пулăшу пулса тăрать, анчах Совет Союзĕн çавăн пирки питĕ пысăк асапсем, пурнăçри трагедисем тата темĕн чухлĕ ишĕлÿсем пулаççĕ».

Совет халăхĕ ăна мĕн пек туйăнни çинчен Дэвис çапла каланă: «Совет халăхĕ, арçынпа хĕрарăмран пуçласа пĕчĕк ачасем таранах, гитлерла Германие тĕп тăвиччен вăрçасси çинчен шутлать. Вĕсем хальхи Германие курайми пулса хаярланса çитнĕ. Вĕсем нумай асап курнă. Вĕсем хăйсен пĕтĕм вăй-халне çын чăтма пултарнă юлашки виçене çитиччен пухса вăрçă ĕçне параççĕ. Вĕсем вăрçăра çĕнтерсе çĕнĕ пурнăçа тухасшăн мĕн пурринпе пĕтĕмпех параççĕ...»

Совет правительствин руководителĕсем Совет Союзĕ çав вăрçăра мĕнле тĕллевсем тытни çинчен калани сăнне астутарса илнĕ хыççăн Дэвис çапла кăтартса панă: Совет Союзĕ тĕнчери чи аслă нацисенчен пĕри, пĕрлешÿллĕ нацисем ăна хисеплеме тата шанса тăма тивĕçлĕ, тенĕ.

Мир тăвас ыйту тĕлĕшпе Дэвис çапла каланă: «Нумайлăха мир тăвас пулсан, вăл аслă нацисем, вĕсен шутĕнче Россия та, çав мирлĕ пурнăçа тума, ăна усраса пурăнма тата яланах хÿтĕлесе тăма килĕшÿ е договор тунине пула пурнăçа кĕрĕ. Тĕнчен пулас йĕркисене плана чух Совет Союзĕпе Англие, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнна опыта шута илес пулать».

Юлашкинчен Дэвис çапла каланă: «Россиясăр çирĕп мир пулма шутлараймасть. Российăна мир кирлĕ, вăл миршĕн тăрать. Россия пире шанса тăни питех те кирлĕ, çавăн пекех пĕрлешÿллĕ нацисем Российăна шанса тăни те кирлĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăрас ĕç пĕр-пĕрне хисеплесе, туслă пулса тата шанса пурăнсан тин ăнăçуллă пулма пултарать».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркене çапла пĕлтереççĕ: июнĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Веллингтон» йышши бомбардировщиксем Мессинăна тапăннă (Сицилия). Çав каçах Англи бомбардировщикĕсем Реджо-ди-Калабрири (Кăнтăр Итали) паромсен станцине тапăннă. Станци территорийĕнче темиçе пушар тухнă.

Июнĕн 29-мĕшĕнче каçхине Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Ле-Манри (Франция) объектсене атакăланă.

Июнĕн 30-мĕшĕнче кăнтăрла Англин инçене вĕçекен истребителĕсем Грецин хĕвелтухăç çыранĕнче чугунçул составне атакăланă.

Июнĕн 29-мĕшĕнче Сен-Назерта подводнăй лодкăсен докĕсем çине бомбăсем пăрахнă чух Америка самолечĕсем бомбăсене пĕчĕк лаптăк йышăнса тăракан объект çине пăрахнă. Бомбăсем пурте тĕл ÿкнĕ. Нимĕçсем Сен-Назерта подводнăй лодкăсем юсамалли доксенче темиçе уйăх хушши ĕçлесе виççĕмĕш шлюз тунă тата шлюз çине тимĕрлĕ бетонпа (бомбăсем шăтараймин туса) витме тытăннă, анчах та Америка бомбардировщикĕсем çав сооружение вăйлă сиенленĕ.

Румыни сарĕнчен салтаксем тарни

СТАМБУЛ, июнĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, Румыни çарĕнчен салтаксем питĕ нумай тара пуçланă. Çăссен командирĕсем хаçатсем урлă таркăнсене çара каялла таврăнма чĕнеççĕ, таврăнмасан çирĕп наказани парассипе хăратаççĕ. Çапла, «Акциуна» ятлă хаçатра Румынин çар влаçĕсем панă пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Ку пĕлтерÿ артиллерин 30-мĕш полкĕнчен тарнă салтаксен ушкăнĕ хăйсем ăçта пурăнни çинчен полк командованине пĕлтерме хушать. Пĕлтермесен вĕсене, тытас-тăвас пулсан, питĕ çирĕп наказани пулать, тесе хăратаççĕ. Çав таркăнсен списокĕнче пĕр кĕçĕн лейтенант, 4 фельдфебель, 3 сержант, пĕр капрал тата 18 салтак пур.

США-ри поляк деятелĕсем чĕнсе калани

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăн паллă деятелĕсем тата Америка гражданлăхне йышăннă паллă поляксем, мĕнпурĕ 45 çын, чĕнÿ пичетлесе кăларнă. Унта вĕсем Польшăна Совет Союзĕпе килĕштерсе ĕçлеме чĕнеççĕ, Польшăн эмигрантла правительстви составĕнчен «демократие хирĕçле çынсене, фашистла элементсене, çавăн пекех тата Совет Союзне хирĕçле элементсене, пурне те тасатма» ыйтаççĕ.

Июнĕн 13-мĕшĕнче Чикаго хулинче конференци пулса иртнĕ. Конференцире 96 делегат пулнă. Вĕсене производствăллă профсоюзсен конгресĕн 25 отделенийĕнчен тата Америкăри ĕç федерацийĕн 3 отделенинчен суйласа янă. Çав отделенисенче Америка гражданлăхне йышăннă 65.000 поляк тăраççĕ. Конференци резолюци йышăннă. Вăл резолюци Америка гражданлăхне йышăннă поляксем хушшинче пĕрлĕх тума ыйтать. Çав пĕрлĕх пĕрлешÿллĕ нацисем хушшинчи пĕрлĕхе çирĕплетме пулăшмалла. Резолюци Польшăн министрĕ пулнă Матушевские тата «Америка гражданлăхне йышăннă поляксен наци комитетне» вĕсен сăтăрла ĕçĕсемшĕн сивленĕ. Конференци делегачĕсем Рузвельта пулăшса пыма, Америка гражданлăхне йышăннă поляксем хушшинчи гитлерла пропагандăна яланах тăрă шыв çине кăларса пыма пулнă, мĕншĕн тесен çав пропаганда пĕрлешÿллĕ нацисем хушшинчи пĕрлĕхе хавшатма хăтланать.

«Рипаблжкен» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Америка гражданлăхне йышăннă поляксем Спрингфилдра союзниксем енче кĕрешекен поляксен пур çарĕсене те пулăшса тăма ятарласа уйрăм организаци тунă. Çав организаци резолюци йышăннă. Резолюци поляксен Совет Союзĕнчи Костюшко ячĕпе тăракан дивизине пурлăхпа тата укçа-тенкĕпе пулăшу парса тăма чĕнет.

Шкул ачисен уйхирти ĕçĕсене тĕрĕс организацилер!

Пирĕн республикăри шкул ачисем иртнĕ çулла колхозсен уйхирĕсенче нумай мар ĕçлерĕç. 5—10 классенче вĕренекенсем çеç ялхуçалăх ĕçĕсенче 2.591.696 ĕçкунĕ тунă, нумай шкулсемпе шкул ачисен отрячĕсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ.

Кувакино районĕнчи Турдаковăри тулли мар вăтам шкулта вĕренекенсемпе вĕрентекенсем ялхуçалăх ĕçĕнче 11.880 ĕçкунĕ тунă. Ку вăл кашни çынна вăтамран шутласан 112-шер ĕçкунĕ тивет. Çапла вара Турдаковăри тулли мар вăтам шкул, ялхуçалăх ĕçĕнче паха тĕслĕхсем кăтартнăшăн, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Çавăн пекех Мишуковкăри (Кувакино р.), Шăхасанри, Комсомольскинчи вăтам шкулсенче вĕренекенсем те уйхир ĕçĕсене организованно хутшăннă. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ тырпул пухса кĕртес ĕçе активлăн хутшăннăшăн Комсомольскинчи вăтам шкулта вĕренекенсене, Пăрачкаври вăтам шкулта вĕренекен Бусыгина (вăл тракторпа ĕçлесе 270 ĕçкунĕ тунă) тата ытти хăшпĕр вĕренекенсене «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокпа наградăланă. Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекенсем (отряд руководителĕ Степанова юлташ) ВЛКСМ Центральный Комитечĕн тата РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн грамотине илнĕ. Кунсăр пуçне, Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе учительсен профсоюзĕн Обкомĕ Ишлейне Элĕк районĕсенчи 7 учителе премиленĕ.

Кăçал республикăра ялхуçалăх ĕçĕсене пурĕ 58.512 вĕренекен хутшăнмалла. Вĕренекенсемпе пĕрле 400 учитель ĕçлемелле. Нумай районсенче тата республикăри кашни хуларах ялхуçалăхĕнче ĕçлеме шкул ачисенчен ĕç отрячĕсем организациленĕ. Чкаловски районра 32 отряд туса, вĕсем çумне учительсем çирĕплетнĕ. Комсомольски районра 46 отряд организациленĕ, вĕсенче пĕтĕмпе 950 вĕренекен пулать.

Мишуковкăпа Сур-Майданри тулли мар вăтам шкулсенчи (Кувакино районĕ) пионерсемпе шкул ачисем уйхир ĕçĕсене кăçал та пĕлтĕрхи пекех активлăн туса пыраççĕ. Ачасем çум çумласа нормăна 120—150-шар процент тултараççĕ.

Анчах районсемпе хуласенчи пур шкулсем те ачасене уйхир ĕçĕсене çителĕклĕ явăçтарайман-ха. Шупашкар хулинчи шкулсен директорĕсем паян куна çитсе те ачасене ялхуçалăх ĕçне ертсе тухас пирки колхозсемпе тата совхозсемпе договорсем туман.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Потемкин юлташăн 1943-мĕш çулхи майăн 20-мĕшĕнчи приказĕ тăрăх, ялхуçалăх ĕçне мобилизациленĕ шкул ачисен военизированнăй отрячĕсене тумалла. Çак отрядсене учительсен ертсе пымалла, отрядсенчи дисциплинăна çирĕплетмелле, ачасене ирхине сигнал парса ыйхăран вăратмалла, ĕçе стройпа илсе тухмалла.

Шкул ачисем куллен ĕç нормине ирттерсе тултарччăр. Отрядри комсомолецсем çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе туса пыччăр, отряд ĕçне лайăхлатассишĕн тăрăшчăр, социализмлă ăмăртăва пуçарса, ертсе пыракансем пулччăр. Отрядсенче комсомол групписемпе пионерсен звенисене организацилемелле.

Шкул ачисен социализмлă ăмăртăвĕн ВЛКСМ Центральный Комитечĕ, РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕ 1942 çулта çирĕплетнĕ условийĕсем 1943 çулшăн та çаплипех юлаççĕ. Учительсемпе шкул заведующийĕсен тата шкул директорĕсен çав условисене пур вĕренекенсене те тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Ялсенчи шкул ачисем, яланхи пекех, уйхирте хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле ĕçлеççĕ. Хăшпĕр ĕçсене (çум çумлама, утă пуçтарма, тырă вырнă çĕре) отрядпа илсе тухма юрать, вĕсемпе пĕрле учительсем пулмалла. Шкул ачисем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле ĕçлеççĕ пулсан та вĕсен ĕçне кирлĕ пек организацилес шутпа, уйрăм колхозсемпе бригадăсем çумне учительсене çирĕплетмелле. Çав учительсен бригадирсене шкул ачисен ĕçне тĕрĕс учета илсе пыма пулăшмалла. Учительсен колхозри учет ĕçне йĕркеленĕ çĕре те хутшăнас пулать.

Шкул ачисем хушшинчи культурăллă-массăллă тата политикăпа воспитани ĕçĕсене учительсемпе аслă классенче вĕренекенсем туса пымалла. Малтан палăртса хунă план тăрăх, вĕсен политинформацисем, тĕрлĕрен калаçусем ирттермелле, хаçатсем вуласа памалла, стена хаçачĕпе боевой листоксем кăлармалла.

ВЛКСМ райкомĕсемпе райçĕрĕç пайĕсен ялхуçалăх ĕçне хутшăннă шкулсемпе шкулти отрядсен ĕçне тăтăшах контрольлесе ертсе пымалла.

Çапла тусан, учительсемпе шкул ачисем кăçал та хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕлĕвĕпе пултарулăхне тырпулсене вăхăтра та пĕр тăкаксăр пухса кĕртнĕ çĕре, фронтпа тăван çĕршыв валли тырпул, пахча-çимĕç тата ытти техникăллă культурăсем парса тăнă çĕре парĕç. Çакă вăл нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкассине çывхартмалли пысăк та патриотла ĕç туни пулать.

Н. ВОЛКОВ,
ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн шкулсен Управленийĕн начальникĕ.
А. ТОКАРЕВ,
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваштарпромсоюза хулара ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекен çынсем кирлĕ: **машинистка, инструктор, бухгалтер-ревизор.**

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар хули, Свердлов урамĕ, 19-мĕш номерлĕ çурт. Тел. 5—74.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.